Енĕш В. Аслă шăллăм – эс - пичче: [сăвă] / Виталий Енĕш
// Коммунизм ялавĕ. – 1990. – 25 çу.

Виталий ЕНЕШ

# Аслă шăллăм — эс — пичче

**«Нарспи» асамçине**

Вышкайсăр аслă Кĕçтентин!
Çулсемпелен
илсен,
енчен,
Эс маншăн шăллăм çеç-и, тен?
Анчах эс — яланах пичче!
Хул-çурампа эс улăп мар.
Эпех, ав, çўлле, чанккама
Чĕвен тарсан та тăрмашсах
Çитеймен пурпер кармашса.

Эс — çутă çалтăр тўпере,
Таçта-таçта — пит аякра...
Эсех — ман Галактикăра:
Хĕрў юнра та клеткăра.

Миçе çĕр хут-ши е пин-пин
Эп каламан: «Нарспи... Нарспи...»
«Нарспи» сан çулам пек таса,
«Нарспи» сан — кĕлĕ пек асам.

Поэзи йывăçĕ тўнмест,
Эсет вал сан хăватупах.
Туратсар йывăç-ске ўсмест,
Туратсар йывăç вăл — юпа.

Эс маншăн — пиçĕ, тĕп тымар,
Эп — сан çинчи ачаш турат.
Пин-пин турат эс шавлаттар,
Пин-пин турат вăл — вăй-хăват.

Эсех — çўл ту çинчи юман.
Çара унта, чул ту çинче,
Анчах çулçу сан çаралман
Парланнă çил сиввисенче.

Çулталăкпех ем-ешĕл эс,
Çулталăкпех ыр çимеçре.
Хаш турă панă, тешмĕртмес,
Сана ыр пил вунçиччерех?!

Вышкайсăр çамрăк Кĕçтентин!
Çулсемпелен
илсен,
енчен,
Эс маншăн шăллăм çеç-и, тен?
Анчах эс — яланах пичче!